27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944
ИЮЛЬ
25
ЫТЛАРИКУН
145(6640) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника МАСЛЕННИКОВА

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем паян, июлĕн 23-мĕшĕнче, ПСКОВ хулипе пысăк чугун çул узелне—нимĕçсен оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пунктне, ЭСТОНИН кăнтăр районĕсене пырса кĕмелли çулсене хўтĕлесе тăракансене, штурмласа туртса илнĕ.

ПСКОВ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче СВИРИДОВ генерал-лейтенантăн, РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ФЕТИСОВ генерал-майорăн, ПОЛЯКОВ генерал-майорăн, ЛУКЬЯНОВ генерал-майорăн, ЗАЙОНЧКОВСКИЙ генерал-майорăн, ШОЛЕВ полковникăн, БЕЗПЕРСТОВ полковникăн, ГЛУШКОВ подполковникăн, ШОСТАК майорăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ЕВДОКИМОВĂН, ЛЕОНОВ полковникăн, РОЗОВ подполковникăн, СИЛИН подполковникăн, КОЖУХОВ подполковникăн, ОЛЕЙНИК подполковникăн, АНДРЕЕВ майорăн, ТЕЛЕШОВ майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КОЛОСОВĂН, ИВАНОВИЧ полковникăн. ЛУКЬЯНОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖУРАВЛЕВĂН, ДОДОНОВ полковникăн, ПОЛУШКО полковникăн, КУЛИШ подполковникăн, ЯКОВЛЕВ майорăн летчикĕсем; БЛОХИН полковникăн, АНГЛИЧАНОВ подполковникăн, МОРОЗ майорăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн СИНЕЛЬНИКОВĂН, ЦАРЕГОРОДЦЕВ полковникăн, ГЕНДЕЛЬ подполковникăн, КОСОБОКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПСКОВ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «ПСКОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 23-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Балтика тăрăхĕнчи 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ПСКОВ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ПСКОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 23-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисем тата утлă çарпа пехота çав тери хăвăрт наступлени тунă хыççăн, ЛЮБЛИН хулипе пысăк чугун çул узелне — нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне, ВАРШАВА хулине пырса кĕмелли çулсене хўтĕлекенскерне — туртса илнĕ.

ЛЮБЛИН хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОРЕЛĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВЕДЕНЕЕВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОПОВĂН, ЛИБЕРМАН полковникăн, МИРВОД полковникăн, ПОТАПОВ полковникăн, КРЕВС полковникăн, СТЕПАНОВ полковникăн, ПИВНЕВ подполковникăн, ТУРЕНКОВ полковникăн, ПИСКАРЕВ полковникăн, АБРАМОВ полковникăн, ИОНИС подполковникăн, ЧЕПЕЛЬ подполковникăн, АНИСИМОВ полковникăн, ЛУКИН полковникăн, ГУРЕНКО майорăн, БАРДНИКОВ майорăн танкисчĕсем; КОНСТАНТИНОВ генерал-майорăн, ЧАЛЕНКО генерал-майорăн, КОБЛОВ генерал-майорăн, БЕЛОВ генерал-майорăн кавалерисчĕсем; ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, РЫЖОВ генерал-майорăн, ВАГИН генерал-майорăн, ШТРИГОЛЬ подполковникăн, МАРЧЕНКО полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ОВЧИННИКОВĂН, МАКСИМОВ полковникăн, ЗАЗИРНЫЙ подполковникăн, ШАДРУХИН подполковникăн, ПЕШАКОВ полковникăн, ДОКРАЧЕВ полковникăн, ЕГОШИН полковникăн, ЗАБЕЛЛО полковникăн, КРАВЧЕНКО подполковникăн, КАГАН полковникăн, МАЛЯВСКИЙ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПОЛЫНИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ТОКАРЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ВИНОГРАДОВĂН, БОРИСЕНКО полковникăн, КАСИНИН полковникăн, ГАВРИЛЬЧЕНКО подполковникăн, ЧУПИКОВ подполковникăн летчикĕсем; ЛЕВИН полковникăн, ЧИСТЯКОВ майорăн, МУРАВСКИЙ капитанăн, ДОГАЕВ капитанăн саперĕсем; ИГНАТЬЕВ подполковникăн, БЕЛЕНКО полковникăн, ИШУТИН подполковникăн, ХОЛОДЕНКО майорăн, ОРЛОВСКИЙ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЛЮБЛИН хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «ЛЮБЛИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 24-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ЛЮБЛИН хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ЛЮБЛИН хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 24-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Флот адмиралне Н. Г. Кузнецова 1-мĕш степень Ушаков орденĕпе наградăласси çинчен

Çапăçусене ăста та хастарлă ертсе пынăшăн тата çавна пула фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче ăнăçусем тунăшăн флот адмиралне Николай Герасимович Кузнецова 1-мĕш степень Ушаков орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 22-мĕшĕ.

СССР орденĕсемпе медалĕсене пани

1944 çулхи июлĕн 19-мĕшĕнче Канаш хулинче СССР Верховный Совет депутачĕ — Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕ хушнипе, правительство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланă рабочисене—вагонсем юсакан заводри работниксене орденсемпе медальсем пачĕ.

Цех начальникĕн заместителĕ Антон Иванович Бессонов Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илчĕ, завод начальникĕн заместителĕ Владислав Николаевич Михальский «Хисеп Палли» орденĕ, инженер Михаил Константинович Леонтьев тата слесарь Василий Николаевич Шопелев — «Ĕçри хастарлăхшăн» медальсем, слесарь Анна Ивановна Быкова тата фрезеровщик Иван Семенович Кривцов — «Ĕçре палăрнăшăн» медальсем илчĕç.

Наградăланисем хăйсен сăмахĕсенче партипе правительствăна тав турĕç, нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара тата та ытларах пулăшассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме пулчĕç.

Юлашкинчен З. А. Андреева юлташ наградăланисене саламларĕ тата малашнехи ĕçсенче ўсĕмсем тума ыра сунчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 22-мĕшĕнче КАРЕЛИ фронтĕнче, СУОЯРВИ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра — ИЗЯНВАРА, ПАХКАЛАМПИ, ЛОНГОНВАРА, ВАРПАВАРА, ЛИУСВАРА ятлă пысăк ялсем. ЛОНГОНВАРА районĕнче пирĕн çарсем хамăрпа Финлянди хушшинчи государство чиккине тухнă.

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Латви ССР-ĕн уезд центрне ЯУНЛАТГАЛЕ хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — АБИЖА, ВЕЛИКОЕ СЕЛО, ЧЕРНЯКОВИЦЫ, КРЕСТЫ, БОЛЬШОЕ ЛОПАТИНО, ЯВАНОВА, ЕЛИСЕЕВО, ЮДИНО, ОРТИХОВО, АМФИЦЕРОВА, НОСОВА, ГУГШПИЛС, ПОДЛИПЬЕ ятлă пысăк ялсем тата ЧЕРЕХА, СТРЕМУТКА, РИТУПЕ, АБРЕНЕ, НОСОВА, ВАВЕРЕС ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ПСКОВ хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа урамсенче çапăçма тытăннă.

ДВИНСК хули енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, КРАСЛАВА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, çав шутра — РУНДЕНИ, БУКМУЙЖА, ДАГДА, АРТЕМОВКА, ЩЕДРАТИ, ЛЕМЕШЕВКА ятлă пысăк ялсем тата КРАСЛАВА чугун çул станцийĕ.

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, пехотăпа танковăй соединенисем вирлĕн атакăланă хыççăн, июлĕн 22-мĕшĕнче ПАНЕВЕЖИС (ПОНЕВЕЖ) хулипе çулсен пысăк узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă, çав шутра — СКАПИШКИС, КУПИШКИС, СУБАЧУС, СУБОЧЬ, СУРДЕГИС, ТРОШКУНЫ, КУРКЛИ, МЕЖИШКИ, БЕЛЖИ ятлă пысăк ялсем тата КУПИШКИС, СУБАЧУС, ПЕТРАКИ, БИГАЙЛЯЙ, ТАРУШКОС, ГАГУВЕЛЕ, СУРДЕГИС, ВАШУОКЕНАЙ, ТРОШКУНАЙ, ПАГОЙНИС ятлă чугун çул станцийĕсем.

ГРОДНО хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, Белосток облаçĕнчи район центрне КРЫНКИ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, çав шутра — БАРАНОВО, ИНДУРА, КУЗНИЦА, ОДЕЛЬСК, МИХАЙЛОВО, НАРЕВ ятлă пысăк ялсем тата КУЗНИЦА, ВАЛИЛЫ чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсене нимĕçсен 110-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ КУРОВСКИЙ генерал-лейтенант тыткăна парăннă.

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, Брест облаçĕнчи район центрĕсене СЕМЯТИЧИ хулипе КАМЕНЕЦ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, çав шутра — БОЦЬКИ, ЖУРОБИЧИ, МОЩОНА, КАЗЕННАЯ, ВОЛЬКА, ДЕМЯНИЧИ, НОВОСАДЫ, СТРАДЕЧ (БРЕСТ хулинчен 16 километр кăнтăртарахра), ЛЕПЛЕВКЫ, ТОМАШОВКА ятлă пысăк ялсем тата КОДЕНЬ, ДУБИЦА, ДОМАЧЕВО, ПРИБОРОВО, ВЛОДАВА чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем июлĕн 22-мĕшĕнче ХЕЛМ (ХОЛМ) хулипе чугун çулсен пысăк узелне штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ОРХУВЕК, СУХАВА, ВЫПУЧНО, ВЕРЩСН, ВУЛЬКА ТАРНОВСКА, БУССОВНО, ОЛЬХОВЕЦ, САВИН, ЧЕРНИЮВ, СТАНИСЛАВУВ, БЯЛОПОЛЕ, СТШЕЛЬЦЕ ятлă пысăк ялсем тата СОБИБУР, РУДА-ОПАЛИН, БЖИЗНО чугун çул станцийĕсем.

ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă, ТОМАШУВ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ВАПАДАНКА, ЦИХОБУЖ-МАЛКУВ, ПОДГОРЦЕ, МАЙДАН-ГУРНЫ, БЕЛЖЕЦ ятлă пысăк ялсем тата БЕЛЖЕЦ чугун çул станцийĕ.

РАВА-РУССКАЯ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, Львов облаçĕнчи район центрĕсене ЛЮБАЧЕВ хулине, НЕМИРОВ хулине, МАГЕРОВ хулине, ГОРИНЕЦ ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ЦЕШАНУВ, ДАХНУВ, ОЛЕШИЦЫ, КЛУКАВЕЦ, ШЕЖЕЦ ятлă пысăк ялсем тата ДЗЕВЕНЦЕРЖ, ГОРИНЕЦ, БАШНЯ, БАШНЯ ДОЛЬНЯ, ЛЮБАЧЕВ, ОЛЕШИЦЫ чугун çул станцийĕсем.

БРОДЫ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе пынă. Июлĕн 21-мĕшĕнче çав районра 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Çапла вара, тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен хисепĕ 5.000 çынтан иртет.

ТАРНОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, Тарнополь облаçĕнчи район центрĕсене БЕРЕЖАНЫ хулине, ПОДГАЙЦЫ хулине, МОНАСТЫРИСКА хулине, КОРОПЕЦ ялне, ЗОЛОТОЙ ПОТОК ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ПАВЛОВ, ЛИПИЦА-ГУРНА, ШУМЛЯНЫ, ТОВСТОБАБЫ, НИЗКОЛЫЗЫ ятлă пысăк ялсем тата КШИВА, МЕЧИЩУВ, ПОДВЫСОКЕ, ПОДГАЙЦЫ, МОНАСТЫРИСКА, КОМАРОВКА чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлла улшăнусемех пулман.

Июлĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 80 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 69 самолетне персе ўкернĕ.

ИЮЛĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем июлĕн 23-мĕшĕнче нимĕçсен оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пунктне — ПСКОВ хулипе пысăк чугун çул узелне штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПИСКОВИЧИ, ХОТИЦА, ЗВЕНКОВИЧИ, КРЕСТКИ, ПАНИКИ, УСАДИЩЕ, ДОВЫЧИ, САФОШНИКОВО, ТРУВИЦИНО, КЛЮЧИ, АКСЕНАВА, МЕДНИКАВА, ЛОДИНИ ятлă пысăк ялсем тата ПУНДУРИ ятлă чугун çул станцийĕ.

СЕБЕЖ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, Латви ССР-ĕн уезд центрне ЛУДЗА хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — КАРСАВА хулипе чугун çул станцийĕ, ДЕГУШАВА, ГОЛИШЕВА, БАРАКАВА, ТЕРЕХИ, МУЙЖЕНИКИ, ПИЛДА, КАУНАТА ятлă пысăк ялсем тата ИСТАЛСНА ятлă чугун çул станцийĕ.

ДВИНСК хули енче пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ЛЕЛИ, АНДРУПЕНИ, СИЛИШКИ, СОМЕРСЕТА, АГЛУПА, ШКЕЙТАВА, ГОРШАНЫ, КРИВОШЕЕВА, МАЛИНОВА, ВАЦПИЛС ятлă пысăк ялсем тата ИЗВАЛ, НАУЕНЕ, ЗАЛУМИ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулипе ДВИНСК хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татнă.

ПАНЕВЕЖИС хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — СОЛОМЕСЦЬ, ГЕЛАЖИ, КОРСАКИШКИ, УПИТА, РОГОВО, ГЕНЕТЫНЕ, ГРИКАЛЕ, РЕМЕЙСАНЫ, ПЛЕВАНЦА, ШИЛЫ, ЛАНЫ, ТОВЯНЫ, ВИДЗИШКИ ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОСТОК хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — БИЛЬВИНЫ, БОБРОВНИКИ, ТАЛЬКОВЩИЗНА, ПОДСОКОЛДА, ЗАЛУКИ, КОЛОДНО, ДОБРЫНОВКА, ФОЛЬВАРКИ, ВЕЛИКИЕ, МАЛИНКА, ТРОСТЯНИЦА, КЛЕНИКИ ятлă пысăк ялсем тата ЖЕДНЯ чугун çул станцийĕ (БЕЛОСТОК хулинчен 18 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре).

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, ВЛОДАВА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ГОРОДИЩЕ, ЗАМОСТЫ, ЗАВЕРШАНЫ, КЛИМОВИЧИ, ЧЕРНЕ (БРЕСТ хулинчен 6 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), ТЕЛЬМЫ ВЛАСНЕ, ОКЧИН, ЛИШНА, СЛАВАТЫЧЕ, КУЗАВКА, ГАННА, ДОЛГОБРОДЫ, ЖУКОВО, КАПЛОНОСЫ ятлă пысăк ялсем.

ХЕЛМ (ХОЛМ) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 300 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра — ПАРЧЕВ, СОСНОВИЦЕ, СТАРЫЙ ОЖЕХУВ, НОВЫЙ ОЖЕХУВ, БЖОСТУВКА, ЗЕЗУЛИН, ПУГАЧУВ, ДОРОГУЧА, СТАЙНЕ ятлă пысăк ялсем тата ЗАВАДУВКА, РЕЙОВЕЦ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ЛЮБЛИН хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа урамсенче çапăçма пуçланă.

ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, ГРУБЕШУВ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЯРОСЛАВЕЦ, ТЕРАТЫН, ТЕРЕБИН, САГРЫНЬ, ТУРКОВИЦЕ, ЛАШУВ, ГРОДЫСЛАВИЦЕ, ЗАХОДНЯ, БОНДЫШ, ЮЗЕФУВ ятлă пысăк ялсем тата ТЕРАТЫН, ГОДЗУВ, ТУРКОВИЦЕ, ЛАЩУВ, ГРОДЫСЛАВИЦЕ, СЕДЛИСКА, СУСЕЦ, МАЗИЛЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

РАВА-РУССКАЯ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, ТАРНОГРУД хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЛАЗОРЫ, БОРОВИНА, ШИШКОВ, ДОМБРОВИЦА, РУДКА, ДОБРА, ВЯЗОВНИЦА, КОНТЫ, ВЫСОЦКО ятлă пысăк ялсем тата НОВАЯ ГРЕБЛЯ, КОЖЕНИЦА, СУРОХУВ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем чылай участоксенче САН шывĕ çине тухнă.

БРОДЫ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, тăшманăн çавăрса илнĕ çарĕсене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çапăçнă чухне 15.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнисем хушшинче нимĕçсен 361-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ ЛИНДЕМАН генерал-майор пур. Пирĕн çарсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—68, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—500 ытла, минометсем—625, бронетранспортерсем—50, автомашинăсем—3.500 ытла. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 30.000 вилли ытла выртса юлнă. Çавсем хушшинче нимĕçсен 340-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн Бойтлер генерал-майорăн виллине тупнă.

ТАРНОПОЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ДУНАЮВ, ПЛЕТЕНИЦА, ЯНЧИН, ДУСАНОВ, СТРАТЫН, ПУТЯТЫНЬЦЫ, ЮНАШКОВ, МЕДУХА, ПЕТРЫЛОВ ятлă пысăк ялсем тата ЖОЛЧУВ, ПОДШУМЛЯНЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ГНИЛАЯ ЛИПА шывĕ çине унăн пĕтĕм тăрăхĕпех тухнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлла улшăнусемех пулман.

Июлĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 94 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 66 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЕЛГАВА (МИТАВА), БЕЛОСТОК, СЕЛЬДЦЕ (СЕДЛЕЦ) ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци, йышлăн вĕçсе кайса, Елгава (Митава), Белосток, Сельдце (Седлец) чугун çул узелĕсенче капланнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Елгава (Митава) чугун çул узелĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Уйрăмах вăйлă взрыв центральнăй чугун çул станцийĕнче пулнă.

Белосток чугун çул узелĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, 30 пушар ытла тухнă. Боеприпассем, вăрçă техники тата нимĕçсен пурлăхне тиенĕ вагонсемпе платформăсем çуннă. Пушарсенче 15 взрыва çити пулнă.

Сельдце (Седлец) чугун çул узелĕнче, бомбăсем тўрех пырса тивнипе, тăшманăн боеприпас склачĕ сирпĕнсе кайнă. Нимĕçсен темиçе çар эшелонĕ çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ, хăшне-пĕрне вут хыпса илнĕ.

Америка авиацийĕ тăшманăн Румынири аэродромĕсене тапăнни

США-н Европăри хĕвелтухăçĕнчи стратегилле сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 22-мĕшĕнче 15-мĕш сывлăш армийĕнчи «Лайтнинг П. 38» йышши самолетсен соединенийĕсем, «Мустанг П. 51» йышши истребительсем хўтĕлесе пынипе, тăшманăн Плоешти (Румыни) районĕнчи аэродромĕсене тапăннă.

Тапăнура пулнă самолетсем СССР территорийĕнчи авиабазăсем çине анса ларнă.

Американецсен самолечĕсем бомбăсем пăрахнине пула, тăшманăн 41 самолет, 6 паровоз пĕтнĕ, горючи склачĕсем тата ытти хуралтăсем те çунса кайнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 15 самолетне персе ўкернĕ.

Американецсен 5 самолечĕ базăсене таврăнман. (ТАСС).

СССР Тинĕс-Çар Флочĕ 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи июлĕн 22-мĕшне çитиччен тапхăрта тунă вăрçă ĕçĕсен итогĕсем

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Совет Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешсе пырать. Совет морякĕсем тăшмана чылай йывăр пораженисем тўстерчĕç, вăрçăн хаяр тĕрĕслевне чыслăн тўссе ирттерчĕç.

Отечественнăй вăрçăра СССР Тинĕс-Çар Флочĕ тăшманăн шыв çулĕсем çинче татти-сыпписĕр кĕрешет. Чи йывăр тата кăткăс условисенче кĕрешекен пирĕн шыв çинчи карапсемпе подводнăй лодкăсем тăшманăн çар карапĕсене тата çарсемпе вăрçă грузĕсем турттарса пыракан транспорчĕсене путараççĕ. Флотăн торпедăсем пăрахакан тата бомбардировка тăвакан авиацийĕ тăшманăн порчĕсемпе базисене атакăлать, тăшманăн портсенчи тата тинĕсри карапĕсене пĕтĕре-пĕтĕре тăкать.

Хĕрлĕ Çарпа таччăн пĕрле тăрса кĕрешсе, пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ тăшманăн тинĕс хĕррисенчи группировкисен флангĕсене тата тылĕсене хăватлăн пыра-пыра çапнă, çавăн пекех тата пирĕн çарсен тинĕс хĕррисенчи флангĕсене тăшман десанчĕсенчен тата тăшман тинĕсрен пырса çапассинчен хўтĕлесе тăнă. Одессăна, Севастополе, Новороссийска хўтĕленĕ çĕрте Тинĕс-Çар Флочĕпе Хĕрлĕ Çар пĕрле тăрса кĕрешни тăшманăн пысăк вăйĕсене нумай вăхăтлăха сыхлантарса тăчĕ, çапла вара нимĕçсен тĕп участоксенчи наступленине чарса тăчĕ. Одесса, Севастополь, Сталинград, Ленинград хулисене геройла хўтĕленĕ кунсенче совет морякĕсем хăйсене ĕмĕрлĕхе чапа кăларчĕç.

Совет Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ ăнăçлăн туса ирттернĕ десант операцийĕсем, çапла, сăмахран, Феодосси, Керчь тата Новороссийск хулисене десант антарнисем Хĕрлĕ Çарăн наступлени тăвакан чаçĕсене пысăк пулăшу парчĕç.

Гитлерла командовани Совет Союзĕн тинĕс çулĕсене хупăрласа хурасси çине пысăк шанчăк хывнă. Шыв айĕнчи тотальнăй вăрçă пуçласа ярса, нимĕçсем пирĕн тулашри тĕнчепе сыхăнса тăмалли çулĕсене татма тата ССР Союзне пĕччен тăратса хăварма хапсăннă. Гитлеровецсен çав планĕсем пĕтĕмĕшпех путланса ларни халĕ те ĕнтĕ яр-уççăн курăнса тăрать. Союзниксен карапĕсемпе пĕрле тăрса кĕрешсе, пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ хăйĕн çурçĕрти зонинче союзниксен Совет Союзĕнчи портсем патне хĕçпăшалпа çар материалĕсем турттарса килекен карапĕсен караванĕсене ăнăçлăн хўтĕлесе тăнă.

Пирĕн йывăр карапсем, шыв айĕнчи флот, торпеднăй катерсемпе авиаци, артиллерин хăватлă вучĕпе, торпедăсемпе тата бомбăсемпе пыра-пыра çапса, фашистла нимĕç захватчикĕсене çав тери пысăк сиенсем кўчĕç.

Отечественнăй вăрçăн 37 уйăхĕ хушшинче ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ нимĕçсемпе вĕсен тарçисенне çакăн чухлĕ ялалăсем шыва путарнă: пулăшакан крейсерсем — 1, сыран оборонин броненосецĕсем — 2, миноносецсем —37, подводнăй лодкăсем—50, миннăй заградительсем—3, тральщиксем—129, хуралта çўрекен карапсем—137, мониторсем—2, канонер лодкисем—12, торпеднăй катерсем—79, хуралта çўрекен катерсем—288, транспортсем—850, пулăшакан карапсем—89, хăй тĕллĕн çўрекен баржăсем—392, вак-тĕвек суднăсем—766.

Кунсăр пуçне, тăшманăн боевой тата пулăшакан карапĕсене пысăк сиенсем кўрсе, нумай вăхăтлăха стройран кăларнă.

Тинĕс-Çар Флочĕн карапĕсем çинчи тата сыранри артиллери, тинĕс-çар авиацийĕ, моряксен отрячĕсем пыра-пыра çапнипе тип-çĕр çинче тăшманăн артиллерипе минометсен батарейисене, танкĕсемпе бронемашинисене, автомашинисене, боеприпассен, хĕçпăшалсемпе çар пурлăхĕсен склачĕсене питĕ нумай пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн карапсем, зенитнăй артиллерипе тинĕс-çар авиацийĕ тăшманăн 6.829 самолет пĕтерсе тăкнă.

Çакăн пек ĕнтĕ СССР Тинĕс-Çар Флочĕн вăрçăн иртнĕ уйăхĕсенчи кĕрешĕвĕн итогĕсем.

Вăрçă пуçланнă чухнех гитлерла сутăçăсем совет флотне пĕтерсе тăкрăмăр тесе пĕтĕм тĕнчене пĕлтерчĕç. Тинĕс çинче пулса пынă вăрçă ĕçĕсем, пирĕн тинĕс-çар вăйĕсем тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапни нимĕçсен çав сăмахĕсем мĕн тери ухмахла та суя пулнине кăтартса пачĕç. Халĕхи вăхăтра пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ тăшманăн карапĕсемпе транспорчĕсене малалла пĕтерсе пырать, тăшманăн çул-йĕрĕсене хупăрла-хупăрла хурать, çапла вара совет территорине ирĕке кăларас тата тăшмана пуçĕпех çапса аркатас ĕçре Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса тăрать.

СОВИНФОРМБЮРО.

Республика уйхирĕсенче

48 колхоз ыраш вырма тухнă

ЕЛЧĔК, июлĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсен уйхирĕсенче [illegible] Районри 56 колхозран 48-шĕ суйласа ыраш вырма тытăнчĕç. [illegible] тăракан колхоз 58 гектар, «МОПР» колхоз 36 гектар ыраш вырнă. Паян «Комбайн», «Пахар» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем ыраша [illegible] вырма тухнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 3 жнейка, «Пахар» тата «Комбайн» колхозсенче 4-шар жнейкăпа выраççĕ. Кашни колхоза [illegible] инспекторсем ĕçлеççĕ, ĕçĕн пахалăхĕ пур çĕрте те аван.

Пур колхозсене те [illegible] ĕçлеççĕ. 12 колхозра вăл [illegible]

В. МАРКОВ,
Сĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Тырă вырма массăллăн тытăнас умĕн

КАЛИНИНО, июлĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри уйрăм колхозсем суйласа ыраш вырма тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне [illegible] «Трактор», «Пĕрлешӳ», «Бро[illegible]», Киров ячĕпе тăракан колхозсем суйласа ыраш вырма тытăнчĕç. Ытти колхозсене халĕ тырă вырма тухма хатĕрленсе çитнине тĕрĕслес ĕç пырать. Колхозсем тырпул пухса кĕртмелли плансене туса çитереççĕ, [illegible] специалисчĕсем пулăшаççĕ. [illegible] «Путь Ленина», «Путь социализма», «Правда» колхозсем [illegible] ВКП(б) райкомĕ [illegible]

Пирĕн МТС кăçал малтанхи хут тырпул пухса кĕрес ĕçе хутшăнать. МТС-ри комбайнерсемпе трактористсем [illegible] Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн ăнлантарас ĕçе [illegible] канашлу туса ирттеретпĕр. Çак паха постановление колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пама кашни колхозах районри активa яратпăр.

Ф. РОМАНОВ.

Пиçнĕ тырра суйласа выраççĕ

ШĂХАСАН, июлĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсен хирĕсенче тырпулсем пиçсе çитеççĕ. Районри чылай колхозсем ĕнтĕ шăнă тырра суйласа вырма тытăнчĕç. «Герой», «Победа», «Соревнование» колхозсем тырă вырма июлĕн 20-мĕшĕнче тухнă. Вĕсем малтанхи кунах 2—3-шер гектар вырнă.

Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳвĕн ответлă тапхăрĕ — тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕç кунран кун сарăлса пырать.

Хĕрӳллĕ ĕç пуçланать

СЕНТЕРВАРРИ, июлĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Шуршăлти Чкалов ячĕпе тăракан 4-мĕш бригадăра (бригадирĕ И. Денисов юлташ) пиçсе çитнĕ ыраша суйласа вырма тытăнчĕç. Ыраш талккишĕпех пиçсе çитмен-ха, анчах та колхозницăсем суйласа 3 гектар ытла вырнă.

Çавăн пекех Ленин ячĕпе тăракан колхозра та ĕнер тырă вырма тухрĕç. Паян Макаç ялсоветне кĕрекен «Красная Звезда» колхоз членĕсем ыраш вырма тухаççĕ.

ВКП(б) райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта ВКП(б) райком секретарĕсемпе райсовет исполком председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта халăх комиссариачĕсен тата хатĕрлев организацисен руководителĕсем те пулчĕç.

Канашлу тырпулсене пухса кĕртме тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлеме мĕнле хатĕрленни çинчен ВКП(б) Вăрнар, Кувакино, Шăмăршă, Елчĕк райкомĕсен секретарĕсен доклачĕсене итлерĕ.

— Пирĕн районри колхозсен,—тет ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ Коротков юлташ, — кăçал пĕрчĕллĕ тырăсем тата пăрçа йышши культурăсем пурĕ 16.511 гектар пуçтарса кĕртмелле. Унсăр пуçне 350 гектар махорка, 350 гектар йĕтĕнпе кантăр, курăк вăррисем 450 гектар, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем 1.297 гектар пуçтарса кĕртмелле.

Пĕрчĕллĕ тырăсене 1.400 гектар комбайнсемпе, 9.403 гектар машинăсемпе тата 5.708 гектар алăпа пуçтарса кĕртме палăртнă. Эпир тырпула июлĕн 25-мĕшĕнче суйласа вырма тытăнатпăр. Июлĕн 31-мĕшĕнче комбайнсене ĕçе яратпăр. Пĕрчĕллĕ тырпулсене 16 ĕç кунĕнче пухса кĕртме палăртнă.

Тырă вырма тухнă хыççăн 4—5 кунтан авăн çапма тытăнатпăр. Эпир, иртнĕ çулхи пекех, авăн çапмалли сарайсене, молотилкăсене вăхăтра юсарăмăр. Трактор вăйĕпе ĕçлекен молотилкăсем тырпулсене комбайнсемпе пуçтарса кĕртмен çĕрте пулаççĕ.

Авăн çапнипе пĕрлех кĕлтесене капана хывас ĕçе туса пыма палăртнă. Çак ĕçе пурнăça кĕртме 6.600 колхознике тата 4.400 лаша уйăрнă. Вĕсем кашни куллен 750 гектар тыррине капана хывма пултараççĕ.

Районри пур колхозсенче те государство валли тырă турттарма транспорт бригадисем организациленĕ. Вĕсене пултаруллă колхозниксем ертсе пыраççĕ. Тырă турттарнă çĕрте 188 вăкăрпа усă курма палăртнă. Пĕтĕм район государствăна тырă тăратмалли обязательствăсене октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултармалла. Колхоз председателĕсем государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе ăмăрту пуçарма йышăнчĕç.

Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ чухне тăкаксене хирĕç кĕрешесси пысăк вырăнта тăрать. Эпир ку тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тума палăртрăмăр. Колхозсенче учет ĕçне лайăхлатмалли кирлĕ мерăсене йышăннă т. ыт. те.

Малалла Коротков юлташ кĕрхи тырăсене акма мĕнле хатĕрленни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Кун хыççăн Кувакино райкомĕн секретарĕ Новиков юлташ сăмах илет. Вăл хăйĕн докладĕнче тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе район умĕнче тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа парса, ĕçри çитменлĕхсене палăртать. Районра тырпулсене пухса кĕртес умĕн тумалли ĕçсене пурнăça кĕртесси юлса пырать. Сăмахран, çĕртме тăвас плана 40 процент çеç тултарнă. Сăлтавĕ кунта тракторсемпе тата туртăм вăйĕпе çителĕксĕр усă курнинче. Хăшпĕр тракторсем запаслă пайсем пулман пирки ĕçлемесĕр тăраççĕ.

ВКП(б) Шăмăршă райкомĕн секретарĕ Дубов юлташ: районри колхозсен кăçал 11.370 гектар çинчен тырпул пухса кĕртмелле, тесе пĕлтерчĕ. Районра комбайнсемпе жнейкăсем, молотилкăсем пур. Вĕсенчен чылайĕшне юсаса хатĕрленĕ. Ытти машинăсене те çак çывăх кунсенчех юсаса çитереççĕ. Тырпулсене пухса кĕртме 5 колхозра июлĕн 25-мĕшĕнче, ытти колхозсенче июлĕн 30-мĕшĕнчен кая юлмасăр тытăнма палăртнă. Курăк вăрлăхĕсене пухса кĕртессине 5 ĕç кунĕнче вĕçлеме шутлатпăр. Пур колхозсенче те пучах пухас ĕçе организацилетпĕр.

— Тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ыйтупа, — тет ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ Волков юлташ, — çуракине вĕçличченех ĕçлеме тытăнтăмăр. Районри колхозсенчен нумайĕшĕсем вăл ĕçе кĕске срокра пурнăça кĕртме хатĕрленсе çитрĕç. Анчах та пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр колхозсенче машинăсене, ĕç хатĕрĕсене юсаса пĕтермен. Уйрăмăнах транспорт хатĕрĕсем хатĕрлесси сӳрĕк пырать. Сăмахран, «Сатурн» колхозра 58 лаша валли пурĕ те 36 урапа кăна пур.

Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра районри колхозсенче 38 агитколлектив пулать. Вĕсемсĕр пуçне 253 çын вулавçăсем пулса ĕçлеççĕ. Районра 53 çĕрте хаçат витринисем, 54 çĕрте кăтарту хăмисем, 43 çĕрте Хисеп хăмисем пур. 49 колхозра куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсем тунă.

Коротков, Новиков, Дубов тата Волков юлташсен доклачĕсем тăрăх пренире Чăваш АССР Милици управленин начальникĕ Калашников, ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ Петров, Шăхасан райсовет исполкомĕн председателĕ Медянин, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Уполномоченнăйĕ Федотов, «Расткаучук» конторин управляющийĕ Ефимов, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташсем тухса каларĕç.

Канашлу хупăнас умĕн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ

КУСЛАВККА

Ялсенчи вулав çурчĕсемпе клубсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕ иртнĕ канмалли кун воскресник ирттерчĕ. Воскреснике комсомолецсемпе çамрăксем 214 çын хутшăннă. Вĕсем çав кун 66 кубометр вутă касса хатĕрленĕ, 90 кубометр турттарнă.

Комсомолăн «Динамо» колхозри пуçламĕш организацийĕ çав кун воскреснике 62 çамрăка явăçтарнă. Пĕр кун хушшинче вĕсем колхоз клубĕ валли 27 кубометр вутă турттарнă, 27 кубометр вутă касса хатĕрленĕ.

Çавăн пекех Варасăрти «Правда» колхозра та (комсомол организацийĕн секретарĕ Мотова) воскресник ăнăçлăн иртнĕ. Унта воскреснике пĕтĕмпе 54 çамрăк хутшăнса, 28 кубометр вутă турттарнă.

И. ШАРКОВ.

ИШЛЕЙ

Комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем чылайĕшĕсем клубсемпе вулав çурчĕсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ воскреснике активлăн хутшăнчĕç.

Кипечкасси ялсовечĕн председателĕ комсомолец Байманов юлташ воскреснике хăй ертсе пычĕ. Çав ялсоветне кĕрекен «Большевик» колхозра 8 кубометр, «Красный танк» колхозра 5 кубометр вутă хатĕрленĕ.

«Эстафета», «МОПР» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсенчи çамрăксем воскресникре клуб валли торф чылай хатĕрленĕ.

Вулав çурчĕсемпе клубсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе воскресник ирттерме район центрĕнчи комсомол активне (пĕтĕмпе 22 çын) ятарласа ялсене ятăмăр. Туллимар даннăйсем тăрăх воскреснике 175 çын хутшăннă.

КУЗНЕЦОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Германири шалти политикăллă кĕрешӳ

(ТАСС-ăн Европăри ĕçсене пăхса тăраканĕ çырнă статьяран)

Тĕрлĕ çĕртен килекен çĕнĕ хыпарсем çакна кăтартса параççĕ: Германири событисем питех те çивĕчленсе кайнă, вĕсем Германи фронтра тӳснĕ поражениcем пирки тухса тăнă шалти кризис малалла вăйланса пынине уçса параççĕ. Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн пулса иртнĕ событисем çакна кăтартаççĕ: Германи генералĕсемпе офицерĕсем Гитлерпа унăн ушкăнне хирĕç тунă каварлашу питех те шала кĕрсе кайнă.

Юнайтед пресс агентствин Базельти корреспонденчĕ, Германирен килекен хыпарсемпе усă курса, çапла пĕлтерет: Германин Мюнхенра вырнаçса тăракан мĕнпур регулярнăй çарĕсене июлĕн 21-мĕшĕнче хĕçпăшалсăрлантарнă та казармăсене хупа-хупа лартнă. Çавăн чухне нумай офицерсене арестленĕ, тарса ĕлкĕрнĕ офицерсене вара халĕ полици шырать. Çав корреспондентах çапла пĕлтерет: халлĕхе çирĕплетсе паман хыпарсем тăрăх, Германин тинĕс-çар флотĕнче Киль тата Штеттин хулисенче хумханусем пуçланнă.

Швецин «Афтонтиднинген» хаçачĕ ĕнер çапла çырнă: уйрăм çынсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлер «йĕркелĕхе тытса тăма» Берлина СС-ăн çĕнĕ чаçĕсене чĕнсе илнĕ. Берлинри правительство çурчĕсене пурне те çарсем вăйлăн хуралласа тăраççĕ. Июлĕн 21-мĕшĕнче ирхине 8 сехетре — Хĕвелтухăç Пруссире çарсем пăлханма тытăнни çинчен тата вĕсем фронта кайма килĕшменни çинчен калакан хыпарсем килнĕ. Кенигсбергра хăйне май осаднăй положени пулса тăнă, унта та СС çарĕсене янă. Кенигсберг урамĕсенче хĕçпăшалсемпе перкелешеççĕ. Хĕвелтухăç Пруссире тĕрлĕ сас-хура сарăлать, халăх шухăш-кăмăлĕ питех те çивĕчленсе ситнĕ. Нимĕçсен пропаганди саракан хыпарсем—Гитлер миршĕн кĕрешекенсен юхăмĕн лидерĕсене арестлени çинчен тата çав лидерсем хăйсене хăйсем вĕлерни çинчен каланисем тĕрĕс мар. Миршĕн тăракансем хăйсен «нацистла тăшманĕсене» арестлеççĕ е вĕлереççĕ. Хаçат каланă тăрăх, тепĕр енчен, тата Гиммлерпа Геринг хăйсен тăшманĕсем тесе шутлакан çынсене пурне те тыта-тыта вĕлереççĕ. «Германипе телефонпа çыхăнса тăрасси татăлнă, çавăн пекех пассажирсем çӳрессине те пĕтĕмпех чарса лартнă. Пĕтĕм Германире, — тесе çырать хаçат,—чрезвычайнăй лару-тăру пулса тăнă. Германин тĕрлĕ кĕтесĕсенчен хумханусем пуçланни çинчен калакан хыпарсем килеççĕ, анчах çав хумханусене çарсем хутшăнни халлĕхе паллă мар-ха. Геббельс гарса пытанни çинчен сас-хура çӳрет».

Событисем мĕн тери сарăлса кайнине Нью-Йоркри радио панă паянхи пĕлтерӳ хăшпĕр енчен кăтартса парать: «Вашингтонра илнĕ хыпарсем тăрăх, Германире Гитлера хирĕçле каварлашăва хутшăннă офицерсене 5.500 çынна арестленĕ те ĕнтĕ».

Швецири «Афтонбладет» хаçат ĕнер Вульф агентствин пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Çав агентство Гитлера май информаци сарать пулин те, çапах та Германире тĕрлĕ вырăнсенче СС çарĕсемпе регулярнăй çарăн отрячĕсем хушшинче çапăçусем пынине çирĕплетсе парать.

Çакна уйрăмах палăртмалла: халĕ Гитлер та, унăн таврашĕнче тăракан çынсем те Гитлерăн штатри пропагандисчĕсен ялланхи тезисне хӳтĕлеме хăтланмаççĕ те. Çав пропагандистсем тăтăшах — гитлерла режима ют çĕршывсенче кăна курайманççĕ, Германире хăйĕнче вара ăна туллă вырăнне хурсах хаклаççĕ, Германире гитлеризма хирĕç ют çĕршыв агенчĕсем кăна тăраççĕ тесе сӳпĕлтететчĕç. Гитлерла руководствăна хирĕç халĕ ĕнтĕ Германи çарĕн офицерĕсемпе генералĕсем тăни çинчен сăмах пынине Гитлер хăй те, унăн ушкăнĕ те пытарма пултараймаççĕ. Гитлерăн ирĕксĕрех çакна йышăнса палăртма тивет: Германи офицерĕсем икĕ пая уйăрăлаççĕ, вĕсенчен пĕрисем Германири хальхи режимшăн шанчăклă çынсем пулса тăраççĕ, теприсем вара — çав режима хирĕç тăраççĕ.

Паян ирхине ирех Германири вăрттăн радиопередатчик Франкфуртри радиостанцин хумĕ çинче Германи офицерĕсемпе салтакĕсене тата нимĕç халăхне чĕнсе каланине панă. Ăна Германи офицерĕ «Гитлера хирĕç тăракан çар ушкăнĕн командующийĕ» ячĕпе вуласа панă. Çав чĕнсе каланинче çакна палăртнă: «Германи офицерĕсен корпусĕн пысăк сийĕ Гитлера хирĕç тăнине Гитлер халĕ ĕнтĕ пытарса хăварма пултараймасть. Гитлера вĕлерме тапăннă Штауффенберг полковник пĕтрĕ, анчах çавăн пек офицерсем халĕ ĕнтĕ пиншерĕн шутланаççĕ. Эсĕ, Гитлер, пирĕн ретрен уйрăм офицерсене тыта-тыта илсе, вĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хăравçăлла вĕлерес кунсем яланлăхах иртсе кайрĕç»,—тесе калать нимĕçсен вăрттăн радиопередатчикĕ.

Çапла ĕнтĕ фактсем çакна кăтартаççĕ: Германи офицерĕсемпе генералĕсем Гитлера хирĕç тăни гитлерла режимшăн хăрушă ĕç пулса тăрать.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, «çирĕпленмен хыпарсенчен Гитлера арестлени паллă пулса тăнă». Çав вăхăтрах, паян Гитлерăн официальнăй пропаганди, пăлхава пусарса лартнă тесе, халăха лăплантармалли пĕлтерӳсем сарнă.

Анчах халех ĕнтĕ çакă питĕ уççăн курăнса тăрать: пулса иртнĕ событисем гитлерла режима тĕпренех кисретрĕç. Гитлерла режима хирĕç пысăк вăйсем, пуринчен малтан Германин çарти вăйĕсем, хускалса кайнă. Гитлер тата унăн аллинчи Гиммлер палачăн отрячĕсем паян генералсем каварлашнине пусарса лартма пултараççĕ пулсан та, ыран вара гитлерла режима хирĕçле пăлхав çĕнĕрен, çавтери хăватлăн та вăйлăн çĕкленĕ, çакă вара, Гитлер çарĕпе Гитлер государстви пуçĕпех пĕтсе ларассине хăвăртлатĕ.

Н. БОДРОВ.

Берлинри лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Стокгольмс тиднинген» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: халь çеç Германирен çитнĕ çынсем каласа кăтартнă тăрăх, Берлинра осаднăй положени тунă пекех. Хула варринче тата правительствăн пур çурчĕсем умĕнче те пулеметсем лартнă. Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн Берлинра 1.000 çынна ытла тытса хупнă. Июлĕн 20-мĕшĕнче гестапо темиçе çĕр офицера персе пăрахнă, вĕсем хушшинче аслă офицерсем те нумай. Çав кун Берлинра пур чугун çул вокзалĕсене те хупса лартнă. Вокзалсенче пулнă çынсене пурне те хытă ухтарнă.

Берлинран килнĕ тепĕр швед та çапла каласа панă: июлĕн 20-мĕшĕнче эпĕ тытса хупнă çынсене турттаракан 100 автомобиле ытла шутласа тухрăм, тенĕ.

ГЕТЕБОРГ, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Гетеборгс постен» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 21-мĕшĕнче Данипе Германи чиккине хупса лартнă, вăрçă хатĕрĕсем турттаракан поездсене çеç çӳреме чарман. Германипе Дани хушшинче телефон халĕ те ĕçлемест.

БУДАПЕШТРИ ДЕМОНСТРАЦИ

БРАЗЗАВИЛЬ, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио Анкара хулинчен илнĕ пĕлтерĕве парать. Çав пĕлтерӳре Будапешт хулинче иртнĕ вырсарникун правительствăна хирĕç пысăк демонстраци пулса иртни çинчен каланă. Демонстрацире 60.000 çын пулнă.

ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙЕН СЪЕЗЧĔ США ПРЕЗИДЕНТНЕ ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙĔНЧЕН РУЗВЕЛЬТА СУЙЛАМА СĔННĔ

ЧИКАГО, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС спец. корĕ). Ĕнер каçхине США-ри демократсен партийĕн съезчĕ çитес суйлавра республика президентне суйлама Рузвельта тăратнă. Съездра Рузвельтшăн 1.086 сасă панă. Рузвельта хирĕç тăракан ушкăнăн кандидачĕшĕн Берд сенаторшăн 89 сасă, наци комитечĕн председателĕ пулнă Варшăн (вăл Рузвельта хирĕç тăрать) пĕр сасă панă. Бердшăн панă 89 сасă пурте тенĕ пекех Луизианы, Миссисипи, Виргини, Техас тата кăнтăрти ытти хăшпĕр штатсенчен килнĕ делегатсен сассисем.

Рузвельтшăн сасăлама чĕнсе, Бэркли сенатор тата США вице-президенчĕ Уоллес сăмах тухса каланă. Бэркли сăмахĕ хыççăн съездра çур сехет хушши Рузвельта хисеплесе манифестаци тунă. Сасăланă хыççăн съезд каçчен ĕçлеме чарăннă. Каçхине вара çĕнĕрен пухăннă. Ун чухне съезд Рузвельтăн радио тăрăх тухса каланă сăмахне итленĕ. Çак сăмахра Рузвельт çитес суйлавра президента суйлама хăйĕн кандидатне тăратассипе килĕшнĕ.

Çавăн пекех тата съезд суйлав программине йышăннă. Çав программăра çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсен чи пирвайхи задачи вăл—ытти пĕрлешӳллĕ халăхсемпе пĕрле тăшмана çĕнтерессишĕн тата вăрăма пыракан тĕрĕс миршĕн кĕрешесси пулса тăрать.

Çав программăрах пĕтĕм тĕнчери арбитраж судне тума сĕннĕ. Çав судăн пĕтĕм тĕнчери тавлашуллă ĕçсене арбитраж урлă йĕркелемелле пулать.

Программăн тулашри политика çинчен калакан пайĕсем пирки съездра пысăк тавлашусем пулман. Расăсем тĕлĕшпе тата гĕн тĕлĕшпе йышлă мар халăхсем пирки хытă тавлашнă. Анчах та йышăннă резолюци кăнтăрти штатсен представителĕсем сĕннĕ пек мар.

Программăна йышăнасшăн съездри делегатсен питĕ пысăк пайĕ сасăланă.

Съезд çавăн пекех тата устав комитечĕн докладне çирĕплетнĕ.

США ВИЦЕ-ПРЕЗИДЕНТНЕ СУЙЛАМА ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙЕ ТРУМЭН КАНДИДАТУРИНЕ ТĂРАТНĂ

ЧИКАГО, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). США-ри демократсен партийĕн съезчĕ çитес суйлавра вице-президента суйлама Трумэн сенатора (Миссури штачĕ) кандидата тăратнă.

США-ри ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙЕН СЪЕЗЧĔ ХУПАННИ

ЧИКАГО, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Виçĕ кун ĕçленĕ хыççăн июлĕн 21-мĕшĕнче каçхине США-ри демократсен партийĕн съезчĕ хупăннă. Съезд США президенчĕ пулма çитес суйлавра Рузвельта суйлама тата вице-президента Трумэн сенатора суйлама сĕннĕ, çавăн пекех тата демократсен партийĕн суйлав программине йышăннă.

РУЗВЕЛЬТ ТРУМЭН ПАТНЕ ЯНА ТЕЛЕГРАММА

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Трумэн пичет представителĕсене Рузвельтран телеграмма илни çинчен каласа кăтартнă. Çав телеграммăра Рузвельт Трумэн сенатора ăна демократсен партийĕ çитес суйлавра США вице-президентне суйлама кандидата тăратнă май саламланă.

США-ра СЛАВЯНСЕН КОНГРЕСНЕ ПУХАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри славянсен конгресĕ сентябрĕн 23-мĕшĕпе 24-мĕшĕнче Питсбург хулинче Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи славян организацийĕсен нациллĕ 2-мĕш съездне пухасси çинчен пĕлтернĕ. Çак съездăн тĕллевĕ паци пĕрлĕхне çирĕплетесси тата çитес суйлавра Рузвельта суйлама тăрăшасси, çавăн пекех тата Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ, Англи тата ытти пĕрлешӳллĕ нацисен туслăхне вăйлăрах çирĕплетме пулăшасси пулса тăрать.

Съезд пирки Америкăри славянсен конгресĕ чĕнӳ пичетлесе кăларнă. Çав чĕнӳре «фашистсем майлă тăракансемпе пуринпе те» пĕр килĕшмесĕр, хаяррăн кĕрешме чĕннĕ.

Америкăри славянсен конгресĕ славян халăхĕнчен тухнă американецсене — çар предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисене — вăрçа кирлĕ хатĕрсем туса кăларас ĕçе ӳстерме тата союзниксене вăрçăра кирек мĕнле ытти майсемпе те пулăшма чĕнет.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: ĕнер нимĕçсен самолет-снарячĕсем, вăхăчĕ-вăхăчĕпе çеç чарăнса тăрса, пĕтĕм талăкĕпех Англин кăнтăрти графствисене, вăл шутра Лондон районне те, тапăннă. Сиен кӳнĕ, вилнисемпе аманнисем пур.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 21-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Сен-Андрэ-Сюр-Орнран кăнтăралла пĕр чарăнмасăр куçса пыраççĕ, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ. Тăшман танксем пулăшнипе Сен-Мартин-Фонтене патĕнче контратака тунă. Союзниксен çарĕсем контратăкăна сирсе янă, тăшмана çухатусем кӳнĕ. Комон хули районĕнче пирĕн çарсем кăштах малалла кайнă. Хĕвеланăç секторĕнче Перье хулинчен кăнтăртарахра тата Перье хулипе Сен-Ла хули хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх, Ремильи-сюр-Лозон хулинчен кăнтăртарахра, союзниксен çарĕсем тĕллĕн-тĕллĕн çитĕнӳсем тунă. Рэд çывăхĕнче тăшман контратакине сирсе янă. Паян ирхине çанталăк начар тăнă пирки авиаци вăйлах кĕрешеймен».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 22-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: «Фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 22-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Фронтăн хĕвеланăç тата хĕвелтухăç секторĕ енче тăшман йышлă контратакăсем тунă, союзниксен çарĕсем контратакăсене пурне те сирсе янă, тăшманăн 14 танкĕнчен кая мар çĕмĕрсе тăкнă. Çурçĕртен пуçласа июлĕн 22-мĕшĕнчи кăнтăрлаччен союзниксен самолечĕсем патрульте кăна çӳренĕ».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 23-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Кан хули секторĕнче, Орн шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре, союзниксен çарĕсем Этаво ялне тăшмантан тасатнă.

Пирен çарсем Этевиль патĕнчен кăнтăралла тата хĕвелтухăçнелле куçнă. Мальто пирĕн алăра тăрать.

Перье хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем Сев ялĕ çывăхĕнче Сев шывĕ урлă каçнă.

Авиаци тăшманăн чугун çул объекчĕсене пыра-пыра тапăннă».

Черчилль Нормандие кайни

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: премьер-министр Черчилль Исмэй генералпа тата хăйĕн штабĕн ытти çыннисемпе пĕрле виçĕ кун хушши Нормандире пулнă хыççăн Лондона таврăннă. Нормандире Черчилль темиçе хутчен те Монтгомери генералпа канашланă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен 8-мĕш армийĕн Адриатика тинĕсĕ хĕрринче кĕрешекен чаçĕсем 3—4,5 километр малалла кайнă. Халĕ вĕсем Сенигаллияна каякан çул хĕрринчи çӳллĕ вырăнти позицисем çинче кĕрешеççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Арно шывĕн улăхĕнче тата Монтэ-Сан-Микелерен çурçĕртерехри тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехри çӳллĕ вырăнсем çинче тĕллĕн-тĕллĕн малалла куçнă. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Арно шывĕн кăнтăр хĕрринчи позицисем çинче çирĕпленсе ларнă. Малти отрядсем Пиза хулинчен 6,5 километрта ларакан пункта çитнĕ.

Союзниксен тактикăллă авиацийĕ ĕнер тăшманăн Италири, Югославири тата Чехословакири объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: пĕр эрне ытла пынă хаяр çапăçусем хыççăн акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Тибр шывĕн улăхĕнчи Читта-ди-Кастелло хулине туртса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Греве хули патнелле (Флоренци хулинчен кăнтăртарахра) çывхарса пыраççĕ.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн малти отрячĕсем Пиза хули патне çитесси 3 километр кăна юлнă. Тăшманăн Арно шывĕнчен кăнтăртарахра тăрса юлнă хирĕç тăмалли узелĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

ÇУРÇĔР ИТАЛИРЕ ГИТЛЕРА ХИРĔÇ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Италире Гитлера вĕлерме тапăнни çинчен пĕлтерекен хыпарсене илнĕ хыççăнах нумай хуласенче, вăл шутра Новарта тата Верчеллте, вырăнти халăх Гитлера хирĕç демонстрацисем туса ирттернĕ. Милан хулинче вăрттăн ĕçлекен ушкăнсем листовкăсем салатнă. Çав листовкăсенче халăха пĕтĕмĕшле восстани тума хатĕрленме чĕннĕ. «Италипе Европăна гитлеризм пусмăрĕнчен ирĕке кăларас кун çывхарса çитет», — тенĕ çав листовкăра.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Сербире халăх çарĕн чаçĕсем Болгари çарĕсемпе, четниксемпе тата недичевецсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Бабичка участокĕнче 650 недичевецпе четника вĕлернĕ е амантнă, 59-ăшне тыткăна илнĕ. Ястребац участокĕнче четниксен пысăк группировкине сапаласа янă.

Хĕвеланăç Боснире тата Сараево çывăхĕнче Югослави чаçĕсем наступлени тăваççĕ. Уйрăмах вăйлă çапăçусем Алипашин Мост хули çывăхĕнче пыраççĕ, кунта нимĕçсем горючи нумай пухса тултарнă.

Банья Лука хулипе Яйце хули хушшинчи çул çинче халăх çарĕн чаçĕсем Карановац ялне туртса илнĕ, Врбас шывĕ урлă хывнă пысăк чугун çул кĕперне ишсе антарнă. Приедор çывăхĕнче четниксен ушкăнне аркатса тăкнă. Бихач хулипе Петрович хули хушшинчи çул çинче нимĕçсен моторизованнăй колоннине аркатса тăкнă. Нимĕçсене нумай вĕлернĕ е амантнă. Хĕçпăшал, боеприпас тата ытти çар пурлăхĕ те тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АНГЛИ АВИАЦИЙЕ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: «Москито» йышши бомбардировщиксем июлĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлина тапăннă, тенĕ.

500 БОМБАРДИРОВЩИК ПЛОЕШТИЕ ТАПАННĂ

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 22-мĕшĕнче 500 йывăр бомбардировщик ытла Италири базăсенчен вĕçсе кайса 11-мĕш хут ĕнтĕ умлăн-хыçлăнах Плоештири нефть предприятийĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 21-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем, Италири базăсенчен вĕçсе кайса, Судет облаçĕнчи промышленность районĕсем çине бомбăсем пăрахнă, бомбардировщиксене истребительсем хӳтĕлесе пынă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ГУАМ УТРАВĔ ÇИНЕ АННĂ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флотĕн командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине ирех Америка çарĕсем Гуам утравĕ çине анма пуçланă.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гуам утравĕ çинче Япони çарĕсем Америка çарĕсене хирĕç Сайпан утравĕ çинчинчен чылай начартарах кĕрешнĕ.

САЙПАН УТРАВĔ ÇИНЧИ ЯПОНЕЦСЕН ГАРНИЗОНĔ ПĔТНИ

ТОКИО, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, японецсен император ставки паян çапла пĕлтернĕ: июлĕн 7-мĕшĕнче ирхине ирех Сайпан утравĕ çинче японецсен çарĕсем юлашки хут атакăланă. Июлĕн 16-мĕшĕ тĕлне японецсен Сайпан утравĕ çинчи çарĕсем пĕтнĕ пулĕ тесе шутлаççĕ, тенĕ çав пĕлтерӳре. Сайпан утравĕ çинче тип çĕр çинчи çарсен командующийĕ Сайто генерал-лейтенант пулнă, тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ — Цудзимура контрадмирал пулнă. Японецсен çак районри çарĕсен главнокомандующийĕ Нагумо вице-адмирал та Сайпан утравĕ çинчи çапăçусенче вилнĕ.

Японире çĕнĕ правительство тунă

ТОКИО, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Койсо генералпа Ионай адмирал Япони императорне çĕнĕ правительство министрĕсен списокне тăратнă.

Çĕнĕ правительствăна çаксем кĕнĕ: премьер-министр — генерал Куниаки Койсо, тинĕс министрĕ—адмирал Мицумаса Ионай, çар министрĕ — фельдмаршал Ген Сугияма, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе хĕвелтухăç Азири ĕçсен министрĕ — Мамору Сигемицу тата ыттисем те.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн июлĕн 23-мĕшĕнчи номерĕнче «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени пичетленсе тухнă. Çав постановленин «Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес тата çав ĕçе туса ирттерес енĕпе» текен 1-мĕш пайĕнчи пĕрремĕшпе иккĕмĕш абзацĕсене çакăн пек тӳрлетсе вуламалла:

«1. Тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен кашни район, МТС, колхоз тата совхоз тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине государство енчен тĕрĕслесе тухмалла, çав ĕçе туса ирттерме республика Совнаркомĕсен, крайисполкомсемпе облисполкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсен, парти крайкомĕсемпе обкомĕсен, райисполкомсен тата парти райкомĕсен ертсе пыракан работникĕсене уйăрмалла.

Колхозсенче, МТС-сенче, совхозсенче пулса иртнĕ тĕрĕслевĕн результачĕсене—райисполкомсемпе парти райкомĕсенче, районсенче пулса иртнĕ тĕрĕслевĕн результачĕсене вара облисполкомсенче, крайисполкомсенче, республикăсен Совнаркомĕсенче, парти обкомĕсемпе крайкомĕсенче, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсенче сӳтсе явмалла та тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре палăрнă çитменлĕхсене пĕтерме çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăнмалла».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 24-мĕшĕпе 25-мĕшĕнче

«ВОЗДУШНЫЙ ИЗВОЗЧИК»

ятлă илемлĕ, саслă фильм кăтартать.

Июлĕн 26-мĕшĕпе 27-мĕшĕнче

«ЧЕЛОВЕК С РУЖЬЕМ»

ятлă илемлĕ, саслă фильм кăтартаççĕ.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

ЧАСАХ

американецсен илемлĕ, темиçе сăрпа ӳкернĕ çĕнĕ фильмне

«ДЖУНГЛИ»

кăтартма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00278 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.